УДК 821.512.111
ББК 84 (2 Рос-Чув) 6-5
В 19

**Михаил Васильев**
Кун-çул утти: сăвăсем /
М.В.Васильев. – Шупашкар, 2015. – 80 с.

Михаил Васильев хăйĕн сăввисенче паянхи ял пурнăçне сăнласа панă. Вĕсенче çутçанталăк илемне курма, авалтан килекен йăласене, тăванлăха пысăка хума, туслăха, чунри тасалăха упрама чĕнет.

**УДК 821.512.111**
**ББК 84 (2 Рос-Чув) 6-5**

© Васильев М.В.,
2015

# Йăлмачча – тăван ял

## Гимн

Шурăмпуç çăлтăрĕ тухăçран
Йăлкăшса таврана çутатсан,
Йăл! кулать Йăлмачча – тăван ял
Çĕнĕ кун пуçлансассăн ялан.

Йăлмачча, Йăлмачча – тăван ял,
Саламлатпăр сана ыр сунса,
Йăлмачча, Йăлмачча – тăван ял,
Юр юрлатпăр сана мухтаса.

Садсенче чечексем çурăлаççĕ,
Çавал шывĕ юхать çуталса.
Тăван ял-йыша вăратаççĕ,
Шăпчăксем юрăсем шăратса.

Йăлмачча, Йăлмачча – тăван ял,
Саламлатпăр сана ыр сунса
Йăлмачча, Йăлмачча – тăван ял,
Юр юрлатпăр сана мухтаса.

Йӑлмачча – тӑван ял, тӗреклен
Кунсерен вӑй хушса чечеклен.
Пурнаймастӑп эп сансӑр пӗр кун –
Ӗмӗр-ӗмӗр санпала манӑн чун.

Йӑлмачча, Йӑлмачча – тӑван ял
Саламлатпӑр сана ыр сунса,
Йӑлмачча, Йӑлмачча – тӑван ял
Юр юрлатпӑр сана мухтаса.

05.04.15

## Ачча ял тăрăхĕ

Канаш енĕн аслă çĕрĕнче,
Кĕçĕн Çавал шывĕ хĕрринче
Сарăлса выртать тавралăх –
Аслă Ачча ялĕн тăрăхĕ.

*Хушса юрламалли:*
*Ачча ял тăрăхĕ,*
*Ачча ял тăрăхĕ,*
*Пилĕк ял таран –*
*Улăхлă çаран.*
*Ачча ял тăрăхĕ,*
*Ачча ял тăрăхĕ*
*Эп сана савап,*
*Сан çинчен юрлап.*

Аччапала Кушăк, Çĕн Ачча,
Савнă ялăм: Катек, Йăлмачча,
Пултаруллă ĕçчен йышпала
Талпăнса утатпăр малалла.

*Хушса юрламалли*

Çут хĕвел айĕнче ӳстерен
Ятлă-сумлă çынсене куллен,
Ачча ял тăрăхĕ, чечеклен
Кунран-кун вăй илсе тĕреклен.

*Хушса юрламалли*

05.04.15

# ЧУНРИ ĂШĂ ТУЙĂМСЕМ

## Тăван Çĕршыв

Тăван Çĕршыв, Чăваш Çĕршывĕ,
Мухтавлă халăхăм – чăваш,
Тĕлĕнмелле паян эс сывă
Нихçанхинчен куллу хавас.
Хĕпĕртетĕп телейĕм пурришĕн –
Савăнатăп хам чăваш пулнишĕн.

Чăваш Çĕршывĕ, Тăван кĕтес
Яту сывлăм пек таса,
Çĕклен çӳле хăватлăн эс,
Юрлап сана эп мухтаса.
Хĕпĕртетĕп телейĕм пурришĕн –
Савăнатăп хам чăваш пулнишĕн.

Тăван Çĕршыв, Чăваш Çĕршывĕ
Вăйлан хăватлăн çуталса,
Куллен-кунах татах çĕклесчĕ,
Чыспа туслăха хытă савса.
Хĕпĕртетĕп телейĕм пурришĕн –
Савăнатăп хам чăваш пулнишĕн.

21.02.15.

## Тăван чĕлхе

Чăваш чĕлхи  – тăван чĕлхе,
Тăван чĕлхе – анне чĕлхи
Шăранса янăрать мухтавлă,
Кашни сăмахĕ сулмаклă.

Тăван чĕлхе çепĕç ялан,
Сан пек вăйли çук тĕнчере,
Мухтанап санпа паян,
Хĕпĕртеп саншăн ялан.

Чăваш чĕлхи – чи хăватли,
Çут тĕнчере чи илемли,
Атте-анне чĕлхи пуртан
Савăнатăп эпĕ чунтан.

Тăван чĕлхе шĕл-кăварлă
Хурçăран та эс чăтăмлă,
Янра, кĕрле, ан çĕт нихçан –
Çухатас мар сана куçран.

14.03.14

## Çĕршыв хушсан

Çĕршыв хушсан, вăй-хал парса
Ĕç тунă, пĕлнĕ юратма.
Салтак пулса, пăшал тытса
Пултарнă çĕршыва сыхлама.

Хам пурнăçра усалланса
Атте-анне ятне яман.
Йăха тăсма мăшăрпала
Ача ӳстернĕ, йăх хăртман.

Пуçăм шуралчĕ юр пекех
Ман питĕмре кун-çул çĕвви.
Çамрăк шăмшак хытнă текех,
Чуна шăнтать ват çын сивви.

Çилпе-ши вĕçрĕç кун-çулсем,
Шывпа-ши юхрĕç ĕмĕтсем?
Вăхăт иртет, йăшать чĕре
Анчах чунăм – вунçиччĕре.

Алхаснă, чупнă ăмăртса,
Ял-йышсене тĕлĕнтерсе,
Вăкăрпа тытăçнă вăй хурса,
Яш чух тем тăвăн юн хĕрсен.

05.01.15

## Шăрăх, пăчă...

Шăрăх, пăчă, чуна тăвăр,
Тарлă кĕпе çапать ӳте.
Куçа кĕрет йӳçĕ тăвар
Вĕри тусан сапать пите.

Куçа шартса хĕвел çиçет
Çӳл тӳперен хĕлхем сапса.
Тăраниччен ĕçес килет
Таса çăлкуç шывне тупса.

Уçă сывлăш сывлас килет
Кăкăр тулли чуна уçса.
Хыр вăрманĕ савса чĕнет
Хăй сулхăнне кăчăк туртса.

Тулă пусси пуçне таять
Тулли пучах аран йăтса.
Ун çиййĕнче ăрша вылять
Вĕтĕ хумлăн юхса, чупса.

Шăрăх, пăчă, чуна тăвăр,
Куçа кĕрет йӳçĕ тăвар.
Тусан вĕçсе варлать пите
Тарлă кĕпе çапать ӳте.

15.06.11

## Кĕрхи хурăн

Тахçанах сăнап ăна,
Вăрманти пĕр хурăна.
Хăй патне вăл илĕртет,
Пĕр пырсан каяс килмест.

Сарă, хĕрлĕ, кĕрен çулçă
Тăкăнать хурăн тавра.
Кăмăл ырă, чунра уçă,
Чăн юмах тĕнчи умра.

Тăрăшсах хывса силлеççĕ
Йывăççем кĕрхи тумне.
Таврана тӳшек сараççĕ
Хĕл каçма çĕр аннене.

Хĕл çитсессĕн шурă хурăн
Ылтăн-кĕмĕлсĕрех юлăн,
Анчах уншăн ан хурлан,
Хĕл каççан каллех çакан.

Хурăна пурте саваççĕ
Хĕл каçма сывлăх сунаççĕ.
Таш-ташлать халь ун тавра
Кĕр хĕвелĕ ман умра.

04.05.13

## Кĕркунне

Тавралăха кĕр кунĕ çапрĕ
Хĕвел кулли те йăвашланчĕ.
Вăхăт-вăхăт сив çумăр сапрĕ,
Сывлăш хăвăрт уçăлтарчĕ.

Пуян та тулăх кăçал сад пахчи,
Груша, слива йывăç палăрми,
Йăрăм-йăрăм хĕрлĕ панулми
Йышлă пулчĕ çулçă курăнми.

Куç тулли помидорĕ те хăяр
Савать кашни çын чунне.
Йăран-йăран сап-сарă сухан
Капăрлатрĕ хĕрĕн сăн-питне.

Уй-хирĕ пушанчĕ, ытарайми
Тырри-пулли тулчĕ пӳлмене.
Купăста, кăшман та çĕрулми –
Пурте тупнă хăйĕн хуçине.

Тавралăха кĕр тумĕ витрĕ,
Çулçăсем тăкăнчĕç саралса.
Çĕр-аннен канма та вăхăт çитрĕ –
Кăмăллăн кулать халь савăнса.

## Пĕлтĕр анчах кун пек марччĕ...

Пĕлтĕр анчах кун пек марччĕ
Хыт-хура, пуш çĕр выртатчĕ.
Халь пăхатăп, мĕн куратăп –
Ача сачĕ тĕл пулатăп.

Пĕлтĕр анчах кун пек марччĕ,
Пыльчăкпа урам çăрлатчĕ,
Халь пăхатăп, тĕлĕнетĕп –
Асфальт сарнă çул куратăп.

Пĕлтĕр анчах кун пек марччĕ,
Лутра йывăç çурт лартчĕ,
Халь пăхатăп, ĕненместĕп –
Виçĕ хутлă шкул куратăп.

Хапха умĕнче халь çуккă
Ăпăр-тапăр, вутă-шанкă.
«Кăвак çулăм» яла çитрĕ –
Асаплă терт таçта çĕтрĕ.

29.10.14

## Яка пыр

Вăранать ирех Петюк
Куçне уçрĕ – ыйхă çук,
Хырăмĕ çăтăр! чĕпĕтрĕ,
Апат çиесшĕн вăратрĕ.

– Мĕн çиес килет Петюк?
Ыйтрĕ амăшĕ – Манюк,
Шоколад, канхвит е пыл –
Сĕтел хатĕр – çиме кил.

– Каланă анне сана
Пылак кирлĕ мар мана,
Кураймастăп эп ăна
Йăлăхтарчĕ ман чуна.

– Татса килнĕ пахчаран
Слива, груша е хурлхан,
Кулач çине çу сĕрсе
Вĕри чей ĕç-ха, вĕрсе.

– Çук, çиместĕп пĕрне те,
Килĕшмест мана пурте.
Амăш вăрçрĕ: «Яка пыр».
Сан пекки ăçта, кам пур?

28.10.04

## Ман кил-йыша ман хурлас?

Ман аннене кам тиркет?
Ялти кахал çын тиркет,
Ĕне суса вăл ялта
Мала тухнă районта.

Ман аттене кам сивлет?
Ялти куштан çын сивлет,
Тракторпала вăй хурса
Орден илнĕ чыс пулса.

Ман пиччене кам хурлать?
Ялти кĕвĕç çын хурлать,
Летчик пулса çĕршывра
Сыхлать тăван çĕршыва.

Ман аппана кам тиркет?
Ялти чăркăш çын тиркет,
Çынсене тухтăр пулса
Сыватать вăл тăрăшса.

Ман кил-йыша ма хурлас?
Ĕçчен пурте – ыр сунас,
Ял-йышсем, туссем пурте
Туслă пурăнар пĕрле.

03.02.11

## Салтак ячӗ – пит сăваплă

Хамăр ялăн каччисем
Хастар, ӗҫчен, маттурсем,
Ҫӗршыв чӗнсен салтака
Ҫула тухаҫ васкаса.

Атте-анне ывăлна
Ăсат ҫӗршыва сыхлама.
Тутантăр салтак пăтти,
Тăхăнтăр салтак атти.

Ах, хӗрӗсем, хӗрӗсем
Чун юратнă савнисем,
Ăсатаҫ пӗр ҫуллăха
Каччисене салтака.

Салтак ячӗ авалтан
Чыслă пулнă вăл ялан,
Ҫӗршыва куҫ шăрҫи пек
Салтак сыхлать ӗмӗрех.

08.07.13

## Вăхăтра вăл çутăр

Çумăра чунтан кĕтетпĕр
Вăхăтра вăл çутăр тетпĕр,
Çĕр-анне питне çуса
Тăр ялан эс тасалса.

Çумăр хыççăн сывлăш уçă
Тасалать тавралăх – ăшă,
Сывлама асамлă çăмăл,
Çĕкленет чун-туйăм, кăмăл.

Аслати кĕрлет, тавралăх
Озонпа пуян, вăл – тулăх,
Эпир кĕтнĕ ăшă çумăр
Килсе çурĕ шăпăр-шăпăр.

Шывсăр çуннă йывăç-курăк
Куççульне тăкмасть вăл урăх.
Ан хурлантăр, йăлтăр култăр,
Савăнса яланах тăтăр.

20.11.13

## Сарӑ ҫулҫӑ тӑкӑнать

Кӗрхи вӑрман хыттӑн шавлать,
Тип турата ваклать хуҫса.
Чӑрсӑр ҫилӗ урсах ташлать
Вӑрман тӑрӑх хуҫаланса.

Сарӑ тӑман – ҫулҫӑ вӗҫет,
Вӗҫет, виҫет хӑйӗн вӑйне.
Ҫавӑрттарса сарса витет
Ҫемҫе минтер ури айне.

Хӑйӗн пӗвне йӑтаймасӑр
Ҫурӑлса аннӑ ват юман.
Лӑпсӑр чӑрӑш чӑтаймасӑр
Тӑпӑлса ӳкнӗ тымартан.

Вӗҫен кайӑк сахал вӗҫет,
Хӑшӗ кайнӑ кӑнтӑр енне.
Пакша мӑйӑр пухса ӗҫлет,
Упа майлать хӑй шӑтӑкне.

Вӑрман хӑйӗн тумне силлет
Хӗле кӗтсе, хатӗрленсе,
Вӑй-хал пухса ҫирӗпленет
Пулас куншӑн ӗмӗтленсе.

22.04.12

## Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ

Шурӑмпуҫ тухӑҫран карӑнсан,
Пин-пин ҫӑлтӑр сӳнсе лӑплансан,
Пӗр-пӗччен шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ
Тӳперен ялкӑшса ҫутатрӗ.

Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ ҫуталсан
Килет ҫӗнӗ кун тухӑҫран,
Шӑпчӑксем шуҫӑмпа вӑрансан
Шӑратаҫ юрӑсем савӑнса.

Кӗмӗл уйӑх тӳперен ал сулчӗ
Хыр вӑрманӗ хыҫне пытанса,
Ҫап-ҫут шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ
Хӗвел тухмасӑр та сӳнмерӗ.

*Хушса юрламалли:*
*Йӑлтӑр-йӑлтӑр ҫут ҫӑлтӑр,*
*Шурӑмпуҫӗн ҫӑлтӑрӗ.*
*Сан ҫуттупа ҫут тӗнче*
*Куҫне уҫрӗ ҫӗр ҫинче.*

19.07.14

## Савнӑ тусӑм

Савнӑ тусӑм пӗр-пӗрне
Юрататпӑр тахҫанах,
Вутра ҫунан чӗрене
Лӑплантар-ха эс, чӑнах.

Тусӑм, тусӑм, каласам,
Юрату мӗн хак тӑрать,
Хаклӑ пулсан, кӑлӑхах
Тен ҫӳретӗп пушӑллах.

Вырӑнта мар ман чӗре
Йӑлт пӗлесчӗ ман пӗрре,
Юрату мӗн хак тӑрать?
Кала, тусӑм, ан хӑрат.

Ытла хаклӑ пулсассӑн
Укҫа ҫитмест, тен, манӑн,
Укҫа тума ыранах
Тен, Мускава каймалла?

Савнӑ тусӑм йӑл! кулчӗ,
Укҫа кирлӗ мар, ал сулчӗ.

Эс пулсассăн çĕр çинче
Мĕнле илемлĕ тĕнче.

Эсĕ маншăн чи хакли,
Эсĕ маншăн чи чапли,
Таса юрату хаклă –
Укçара мар, вăл чунра.

18.01.15

## Ăçта курнă эп сана?

Кунĕн-çĕрĕн шухăшларăм,
Тĕлĕкре те сана куртăм.
Сăну çунтарать чуна,
Ăçта курнă эп сана?

Тарăн шухăша путса
Ял-ял тăрăх шав утса
Шырарăм, хĕрхен мана,
Ăçта курнă эп сана?

Таврана савса сăнап,
Пурпĕрех сана тупап.
Эп манман-ха сан сăнна
Ăçта курнă эп сана?

Йăлтăр куллу куç тулли,
Шăнкăрав пек ян! сасси
Тыткăнлать манăн чуна,
Ăçтан тупас ман сана?

Ах, асилтĕм – Канашра.
Кайнăччĕ эп пасара.

Чипер хӗр сутать тавар,
Ыйтрӑм – ху мӗн хак тӑран?

Тепӗр кунне ирхине
Вӗҫрӗм Канаш пасарне.
Мана курчӗ, йӑл! кулчӗ,
Уйӑхранах туй пулчӗ.

## Кун-ҫул тараси

Пӗрин кун-ҫулӗ Атӑл пек вӑрӑм,
Тарӑн та тулӑх, пит сарлака.
Теприн, ав, кӗске, чӑн кантӑр ҫурӑм,
Пурнӑҫ утти ҫӗмрӗк картлашка.

Кашни ҫыннӑн пур кун-ҫул тараси,
Шав виҫет чун-чӗре хӗлхемне.
Турӑ ҫырнӑ шӑпаран тарасси
Вӑл пулман ҫӗр ҫинче ӗмӗрне.

Пурнӑҫа пурӑнма пӗлмелле,
Ӑна шитпеле виҫмелле,
Кирлӗ-кирлӗ маршӑн эс ан ур,
Нихӑҫан та ура эс ан хур.

Кун-çул тараси шав виçет кун-çула
Йăнăшмасть, вăл шутлать, кашни
иртнĕ çула.
Пăхать сăнаса кашни çынна куçран,
Тăн парса ачашлать вăл пуçран.
08.05.14

## Ма пурнас-ха ман пĕччен?

Чĕре витĕр эп сăнарăм
Кӳршĕри сар пикене,
Ах, хăçан-ши пулĕ арăм
Шухăшларăм çуркунне.

Çу кунĕсем çу пек çитсен
Çĕр сĕткен тулса пиçсен,
Ешерет симĕс тĕнче –
Пурăнас килмест пĕччен.

Ем-ешĕл уй-хир, тавралăх
Хускатать ман яш чуна,
– Ма пурнас-ха пĕччен тăлăх,
Сая ярас мар куна.

Кӳршӗ хӗрӗ пит маттур вӑл,
Агроном – уй-хир патши,
Хам та фермер, иккӗн ҫӑмӑл
Ӳстеретпӗр ҫӗр тӗшши.

Ҫӗр чӗтренчӗ ҫимӗк кунӗ,
Ян! янрарӗ чаплӑ туй.
Ик чӗрен хӗрӳллӗ юнӗ
Хутшӑнать, ҫавна эс туй.

15.01.14

## Куҫ курать те шӑл витмест

Хӗрӗхе ҫитнӗ Ҫтаппан
Паян кун та авланман.
Шухӑшлать: епле пурӑнас,
Мӗнле арӑмлӑ пулас?

Ачаран ҫамрӑк чухне
Никампа та хутшӑнман,
Хӗрсемпе те калаҫман –
Хирӗҫ тӑрса йӑл! кулман.

Ытла чӗмсӗр пулнӑран
Калаҫнӑ аран-аран:

Мĕнле авланас? – Пĕлмест,
Куç курать те шăл витмест.

Тукасри Санюк тахçан
Килнĕ чухне фермăран,
Сăмах хушнăччĕ кулса –
Çтаппан чĕнмерĕ курсан.

Тăм чĕлхе Çтаппан чунне,
Тăллать çамрăк ĕмĕрне,
Мĕнле авланас? Пĕлмест –
Куç курать те шăл витмест.

Чăн та килĕшет Санюк –
Тиркеме сăлтавĕ çук,
Пит ĕçчен те, пит маттур,
Анчах, тен, савнийĕ пур?

Сăнĕ-пуçĕ начар мар,
Кĕлетки те ун патвар,
Хуçалăх тытса пыма
Лайăх арăм пулмалла.

Паллашас, чĕлхе мăка,
Кам пулăшĕ-ши ăна?
Мĕн тăвас? Çтаппан пĕлмест –
Куç курать те шăл витмест.

Хăçанччен-ши пурăнас,
Çемьеллĕ хăçан пулас?
Мĕнле ĕмĕр иртterес,
Тен, Снаюк килнех каяс?

Çук хăюлăх ун кайма,
Сăмах явса пуçăнма.
Чун хăрать килне кайма
Ăшă сăмах пуçарма.

Пуç тавра вăл шухăшлать,
Пуçра вăл-ку пăтранать,
Вĕççĕр шухăш çăмхине
Сӳтсе çитĕн-ши вĕçне?

Пĕр савăнăç курмасăр
Ĕмĕр иртет усăсăр.
«Йăх хăварма тур çырман
Мана», – тет хусах Çтаппан.

Çынсем, ав, пурте телейлĕ
Чăмăртаннă, ăш çемьеллĕ,
Вĕсем пек пулас килет –
Куç курать те шăл витмест.

20.05.11

## Ма савăнса юлас мар?

Эп те юрлап, эс те юрлан
Шăрантарса пĕр юрра,
Хаклă тăван, эс ан хурлан
Санпа пулсан çăмăл чуна.

Эс те ташла, эп те ташлап,
Иккĕн пĕрле, пĕр кĕвĕпе,
Сана чунтан савап кумма,
Килсе лар-ха, эс ман çумма.

Эп те кулап, эс те кулан
Пĕрне-пĕри куçран пăхсан,
Ма кулас мар, ма савăнас мар
Пур тăванпа пĕрле пулсан.

*Хушса юрламалли*:
Ах, мар, юлас мар,

Çынран кая юлас мар,
Çут тĕнчере пĕрле чух
Ма савăнса юлас мар.

14.08.14

## Ман санпа пулас килет

Ман санпа пулас килет,
Юнашар утас килет,
Чунри ăшă туйăма
Çурмалла пайлас килет.

Ман санпа юрлас килет,
Ман санпа ташлас килет.
Кĕмĕл купăс сассипе
Пĕрле вĕçессĕм килет.

Ман санпа кулас килет,
Ăшшăн ачашлас килет.
Юратури çулăмпа
Сана çунтарас килет.

Куçран-куç пăхас килет,
Мăшăрлă пулас килет.
Ĕмĕрех пĕрле пулса
Савăнса пурнас килет.

18.12.14

## Тавах атте-аннене

Атте-анне килĕнче
Вĕсен ăшă пÿртĕнче
Ÿссе ырă куратпăр
Пурнăç çулне тухатпăр.

Çакă аслă çĕр çинче
Мĕнле чаплă çут тĕнче.
Чун-чĕре вăй-хал çĕклет,
Кил-йышпа пулас килет.

Эх, аттеçĕм-аннеçĕм
Эсир панă кун-çулăм
Пулчĕ маншăн телейлĕ –
Хама туятăп вăйлă.

Ачасен ăшă кулли
Тултарать пÿрте тулли.
Вĕсемпе пурнас килет –
Савăнăç чуна çĕклет.

Тавах, атте-аннене,
Мана пурнăç панишĕн,
Ах, манас çук ĕмĕрне
Вăй-хал парса тăнишĕн.

17.11.14

## **Пĕр пĕччен**

Хура хурлăхан,
Ытла ан хурлан,
Пахчара пĕччен
Ирĕккĕн ӳсен.

*Хушса юрламалли:*
*Пĕччен мар эс, пĕччен мар,*
*Тус-тăван таврара пур.*
*Юр юрлаççĕ хурăнсем*
*Таш-ташлаççĕ йăмрасем.*

Сиплĕ хурлăхан,
Вăйлă ан хумхан,
Ешер, чечеклен
Сарăлса пĕччен.

*Хушса юрламалли*

Çил ачи лăскать
Сан пурçăн тумна,
Сар кайăк юрлать
Ларса сан çумна.

*Хушса юрламалли*

Хура хурлăхан,
Савăнса хумхан,
Эс хавас пулсан
Савăк эп ялан.

## Хаклă анне

Ача чухне те анне,
Ӳссе çитсен те анне,
Яланах асран тухмастăн –
Ху ачусене саватăн.

Кашни çыннăн пĕр анне –
Çуратнă тăван анне,
Тав тăватăп эп сана
Чун панишĕн эс мана.

Хаклăран хаклă анне
Ăшăтатăн чĕрене.
Çутă уйăх пек сăну
Çемçе кăмăллă чуну.

Ача чухне те анне,
Ӳссе çитсен те анне,
Вăй хушатăн чĕрене,
Пăрахмастăн эс пире.

19.11.13

## Пурăннă чух савăнар

Сад пахчинче улма çисе савăнтăм,
Хам кăмăла чунра яр уçрăм.
Ай-хай сар улми
Пулнă çулçă палăрми.

Шĕшкĕлĕхре мăйăр татса çӳрерĕм,
Хам вăй-хала çӳле çĕклерĕм.
Ай-хай, сар мăйăри
Пулнă çулçă палăрми.

Ял-ял тăрăх хам тăвана шырарăм,
Çитмен вырăн пач хăвармарăм.
Ай-хай, тус-тăван
Ытла инçе пурăнан.

Ытла инçетре пурăнан,
Ытарайми ман хаклă тăван.
Ай-хай, инçетре пурăнан,
Пурпĕр çывăх курăнан.

Каллĕ-маллĕ тĕплĕн шутласан,
Пĕр-пĕрне хăнана йыхăрсан,
Ай-хай, ман тăван,
Пĕрле пулсан пит аван.

24.08.14

## Вăйăра

Çурхи кун илемлĕ – шăп
Çутçанталăк лăпкă – тăп,
Шăратаççĕ çамрăксем
Вăй картинче юрăсем.

Купăсçă ура тапса
Туртать вăйпа купăса.
Яш-пике ташша çапса
Савăнать алă çупса.

Купăс сасси шăранса
Саланать пур таврана.
Хĕрӳ чунри вăй-хала
Тытса чарас çук капла.

Их чух, çамрăк чух,
Чунра юн вĕренĕ чух,
Савăнса юрлар пĕрле
Çурхи ырă каç çĕрле.

17.07.14

## Манаймас çаплах сана

Тухса кайрăн та эс çĕтрĕн,
Пач памарăн сас-хура,
Эпĕ çунтăм, эпĕ кĕтрĕм –
Манăн чун çунать вутра.

Ах, ларасчĕ çумма-çумăн,
Тĕл пуласчĕ куçа-куçăн
Кантăка çапать сив çумăр
Тăлăх иртнишĕн ман ĕмĕр.

Улталарăн эс, çухалтăн,
Ют çынпа эс тухса тартăн.
Ыр курмарăм эпĕ сансăр
Эсĕ пултăн маншăн чунсăр.

Аллă çул шăпах та иртрĕ
Сан сăнна эп курманни.
Те эс чĕрĕ, те эс вилнĕ,
Кирлех-ши халь хумханни?

Хам та халĕ пит ватăлтăм
Йăлтах çитрĕм тайăлса.
Хăвăл йывăç пекех хăртăм,
Манаймас çаплах сана.

11.12.13

## Ан сая яр эс мана

Чарăнмастăн – чарсан та,
Итлеместĕн – илтсен те,
Санăн ӳсĕр пуçупа
Ыр курмастăп эп санпа.
Ытла йывăр ман чуна,
Сая ятăн эс мана.

Таврăнмастăн ĕç хыççăн,
Таçта ютра çӳретĕн.
Ир енне вара вăрттăн
Эс килетĕн тин «ĕçрен».
Тамăкра ялан усран,
Сая ятăн эс мана.

Манăн чун сана кĕтет,
Çывраймас, ыйхă вĕçет,
Таврăнсан, сăмах хушсан
Хирĕçме сăлтав шыран,
Ыр курмастăп эп санпа,
Сая ятăн эс, мана.
Çакă çутă тĕнчере,
Аслă Турă умĕнче,
Тархаслатăп эп сана
Ан сая яр эс мана.

07.01.15

## **Ăçта çӳретĕн ютра?**

Çĕмĕрт çурăлнă вăхăтра
Çӳретĕн савни ютра.
Хамăр умри пахчара
Эп каланă самантра
Ма пулас мар ман санпа?

Çеçкере шап-шур сирень,
Савни эс ютра çӳрен,
Кама шыратăн ютра?
Ял çумĕнчи катара
Шăпчăксем кĕтеç пире.

Лантăш çурăлнă вăхăтра
Ан çухал, савни, манран.
Хамăр умри сак çинче
Çутă уйăх çутинче
Сана кĕтетĕп чунтан.

Çеçпĕл çеçки шап-шурă
Ăçта çĕтрĕн, ах, турă?
Çавра кӳлĕ хĕрринче
Тап-такăр вăрттăн сукмак,
Пире кĕтет унти сак.

15.01.15

## Çурмалла пайлар

Манăн савнă тусăм,
Пуçна ма усан?
Каласамччĕ, чунăм,
Мĕнле хуйхă сан?

Хуйхă манăн пысăк,
Вăй çитмест йăтма.
Кăмăлăм та пăсăк,
Йывăр-çке чăтма.

Санăн йывăр хуйхă
Çурмалла пайлар.
Таçта вĕçнĕ ыйăхă,
Шыраса тупар.

Лайăхланчĕ кăмăл
Хуйха пайласан.
Кун пек мана çăмăл,
Тусăм, эс пулсан.

20.01.15

## Пур-ха, пур кирлӗ сăмах

Ман санпа калаçмалли
Пур-ха, пур кирлӗ сăмах.
Эсӗ маннă ман пирки –
Ан пултăрччӗ пăтăрмах.

Ман çинчен суя сăмах
Такам сарнă самаях,
Ӗненсе эсӗ ăна
Сутса ятăн ман чуна.

Ах, юлашки вăхăтра
Эп çунатăп-çке вутра.
Йăлтах эсӗ улшăнтăн –
Теприне эс тӗл пултăн.

Эсӗ мана пăрахсан та,
Таçта инçете кайсан та,
Чунăм сивӗнмӗ санран,
Тунсăхлатăп эп саншăн.

Сана ман пек никам та
Пултараймӗ юратма.
Ах, çавна эсӗ туйсам –
Савнă тусăм ман пулсам.

21.01.15

## Сӳннӗ юрату

Ман паллашнӑ каччӑ пур,
Халь ҫӳрет вӑл салтакра.
Пултарullӑ, пит маттур –
Салам ярать аякран.

Ӑна эпӗ ӗненсе
Чиксе ҫӳреп ун сӑнне,
Таврӑнсанах пӗрлешсе
Пурӑнатпӑр пуль, тесе.

Пӗр ҫултан эсӗ ҫитрӗн
Тӑван яла инҫтерен,
Килнӗ каҫах эс ҫӗтрӗн:
Ӑсатрӑн урӑх хӗре.

Кашни каҫ урӑх хӗре
Ҫавӑтатӑн эс ҫӗрле,
Вунӑ кунта вун хӗре
Тӗл пулчӗ санӑн чӗре.

Ӗнер кайрӑн Наҫтукпа,
Паян кайрӑн Катюҫпа,
Ыран вара Манюкпа,
Унтан Галя, Маруҫпа.

Тĕл пулмарăмăр пĕрле
Килнĕ кунтанпа çĕрле,
Калаймарăм кирлине,
Чун-чĕре тĕпĕнчине.

Ман пекех ыттисене
Улталатăн хĕрсене.
Хĕлĕмпе çунмасть шалта,
Сӳнĕ юрату сан та.

14.12.2001

## Ах, çиллентĕм аннене

Ах, çиллентĕм аннене.
Хĕвел тухсан ирхине,
Вăл вăратрĕ силлесе –
Эп вăрантăм çилленсе.

Тутлă ыйхăна татса
Пуçа тытрăм эп ярса,
Çĕр каçнă эп савнипе
Ăна хытă савнипе.

Анне хăй хĕр пулман-и?
Аттепе тĕл пулман-и?
Ма ыйхăран вăратать,
Мана ирех тăрататъ?

Йывăр пулчĕ вăранма,
Тутлă ыйхăна татма,
«Ĕçе кайма вăхăт», – тет,
«Апат хатĕр, тăр-ха», – тет.

Ах, çиллентĕм аннене,
Йывăр пулчĕ чĕрене,
Мана канма памарĕ,
Юлхавланма хушмарĕ.

Пĕр шутласан, кирлех-ши
Чăн сăмахшăн çилленме?
Юрататть хăй ачине –
Тарăхмастăп аннене.

12.03.

## Пит нумай сана шырарăм

Пит нумай сана шырарăм,
Ĕмĕтĕм тулчĕ аран.
Ăнсăртран курса тĕл пултăм,
Ĕмĕрех эс пулăн ман.

Эсĕ маншăн çутă çăлтăр,
Йăлкăшатăн йăлтăр-йăлтăр.
Эпĕ тупрăм чăн-чăн мăшăр
Тӳпери çап-çутă çăлтăр.

Эсĕ маншăн çутă уйăх –
Санпала ман пурнăç тулăх.
Эс маншăн çут хĕвелĕм
Çулăмпа çунан хĕлхем.

Пурăнасчĕ, пурăнасчĕ,
Ĕмĕрех пĕрле пуласчĕ,
Хĕрӳ таптăр ик чĕре
Пĕрлештертĕр вăл пире.

24.01.15

## Виç хĕрарăм – пĕр пасар

Аслă ялăн вĕçĕнче
Хĕрарăмсем тем çинчен.
Хыт шавлаççĕ – паллă мар:
Виç хĕрарăм – пĕр пасар.

Лавкка умĕнче ялан
Хĕрарăм сасси ян-ян.
Нумайăн мар, сахал мар –
Виç хĕрарăм пĕр пасар.

Тавлашса утаç вĕсем,
Пăртак хĕрĕнкĕ хăйсем.
«Кирлĕ мар сăмах ан сар»:
Виç хĕрарăм – пĕр пасар.

Шавласа хĕрарăмсем
Кĕтӳ хăвалаç хăйсем.
Чăн калаççĕ, ахаль мар
Виç хĕрарăм – пĕр пасар.

Пит ĕçчен, хастар хăйсем,
Йăл! кулаççĕ час-час.
Хурлама пач кирлĕ мар:
Виç хĕрарăм – пĕр пасар.

11.02.15

## Курманнин курас килет

Курманнин курас килет,
Пурне те пĕлес килет,
Пурнăç тути-масине
Тутанса пăхас килет.

Курманнин курас килет
Каччăпа çӳрес килет,
Юрату вучахĕнче
Çулăмпа çунас килет.

Курманнин курас килет,
Куçран-куç пăхас килет.
Хирĕç пăхса, йăл кулса
Ытаалас, савас килет.

Курманнин курас килет,
Юратса пурнас килет,
Савнă мăшăрпа пĕрле
Ĕмĕрех пулас килет.

Курманнин курас килет.

04.02.15

## Эпĕ пĕччен мар

Эпĕ пĕччен мар,
Эпĕ тăлăх мар.
Ман атте те пур
Ман анне те пур.
Çĕр çинче пĕрре
Пурнатпăр пĕрле.

Эпĕ пĕччен мар,
Эпĕ тăлăх мар.
Манăн мăшăр пур,
Ачасем те пур.
Пĕрле савăнса
Пурнатпăр йышпа.

Эпĕ пĕччен мар,
Эпĕ тăлăх мар.
Тăвансем те пур
Ял-йышсем те пур.
Тĕнчере пĕрле
Пурнатпăр пĕрле.

Телейӗм пуртан
Савӑнап чунтан,
Йышпала пулар,
Туслӑ пурӑнар.

11.01.15

## **Ма пăрахрăн эс, мана?**

Куллен-кун иртсе çӳретĕн
Пирĕн пахча умĕнчен,
Çаврăнса та эс пăхмастăн
Аса илместĕн ман çинчен.

Мĕншĕн мантăн-ши мана?
Юрататăп эп сана.
Ма пăрахрăн-ши мана?
Сансăр йывăр ман чуна.

Суя хыççăн, элек хыççăн
Ма каятăн? Кала уççăн,
Çын сăмахне ĕненсе
Халь çӳретĕн çилленсе.

Çын сăмах чуна хуçать
Ман пуça йăлтах усать,
Пирĕн пĕрле пулмалла,
Юратуллă пулмалла.

Ан шутла-ха, тусăм, эсĕ
Урăххи ман пур тесе.
Сансăр пуçне никама
Эп сутмастăп чунăма.

24.01.15

# ПУРНĂÇ КАРТЛАШКИ

## Ăсату

Умра çĕмĕртсем çеçкеленчĕç,
Каллех чечекре çут тĕнче.
Хыçра шурă хурăн ĕречĕ
Юсать тутăрне çил çинче.

Сăртра хĕр-упраç кĕпĕрленнĕ,
Кур, тухнă салтак ăсатма.
Çамрăксем çула хатĕрленнĕ,
Çĕршыв кун-çулне сыхлама.

Ав, амăш куçне типĕтесшĕн
Тытать шурă тутăр вĕçне,
Хăйĕн ывăлне тем каласшăн,
Çăтать калайман сăмахне.

Хуллен ал сулать шурă хурăн,
Пиллет ял çумĕнчиката:
«Салтак, хастарлă эс пурăн
Ан яр çывăха çич юта».

Вĕрет ăшă çил вăш та вăш,
Саланать салтак юрри ял çинче.
Ах, мĕскер шухăшлать салтак амăш
Пĕччен уй хапхи умĕнче?

30.12.14

## Шăллăм

Манăн шăллăм Мускавра –
Пурăнать тĕп хулара.
Нумай пулать курманни,
Тĕл пулса калаçманни.

Килсе каять хăнана
Кашни çул пĕрре кăна.
Савăнтарать кил-йыша,
Хутшăнсан хамăр йыша.

Атте-анне, пур тăван
Сĕтел тавра пухăнсан,
Куç илмесĕр шăллăма
Юрататăп сăнама.

Ӳссе сарăлнă, патвар,
Çӳллĕ, вăйлă та хастар.
Аллипе шăлать çӳçне
Вылятса çăлтăр куçне.

Çĕкленет ман кăмăлăм
Çумра пур чухне шăллăм,
Тав тăватăп чĕререн
Манса кайманшăн пире.

21.10.14

## Виҫӗ район чиккинче

Эп тăратăп сăрт ҫинче,
Виҫӗ район чиккинче,
Канашпа, Йӗпреҫ, Вăрнар –
Пӗрле туслă пурăнар.

Савăнăҫ ҫиҫет питре,
Тавралăх ытла хитре,
Ҫутă хӗвел айӗнче
Ах, илемлӗ ҫут тӗнче.

Кăнтăрта Йӗпреҫ енӗ,
Ешерет уй-хир, вăрманӗ,
Кушлавăш шывӗ тăрăх –
Ҫăра курăклă улăх.

Инҫех мар Упакасси,
Илтӗнет Элкер сасси,
«Хӗн-хур айӗнче» чăтса
Ҫӳренӗ Чакка тарса.

Канаш енӗ – тухăҫра
Ыраш калчи ҫăп-ҫăра,

Йăл кулать Çĕнĕ Шуртан
Йăлмачча ялĕ пуртан.

Вăрнар çĕрĕ – анăçра,
Илĕртет вăрман куçа.
Кушлавăш уйĕ тăрăх
Кульцавсем пурнаç тулăх.

Канашпа Йĕпреç, Вăрнар,
Яланах пĕрле пулар,
Уй-хир ĕçĕ пуçлансан
Пĕр-пĕринпе туслашсан.

## Тăван кил

Тимĕр витнĕ йывăç пӳрт
Пилĕк чӳречеллĕ çурт.
Çак пӳрте атте хăй лартнă,
Аннепе çемье çавăрнă.

Ах, асран тухман атте,
Ах, асран кайми анне,
Çакăнта мана чун панă,
Çакăнта ӳстернĕ, пăхнă.

Ĕмĕрех асра тăван кил,
Атте-анне панă ăш пил.
Шкула чупнă та ăс пухнă,
Хастарлă, хăюллă пулнă.

Кирек ăçта çул тытсан та
Килтен аякра пулсан та,
Манаймас сана, тăван кил,
Ан пăрах, ялан ас ил.

Тимĕр витнĕ йывăç пӳрт,
Пилĕк чӳречеллĕ çурт,
Ман чуна эс ăшăтан,
Пурнăçра вăй-хал паран.

05.01.15

## Пирĕн радио

Чăваш наци радионе
Чунтанах итлес килет,
Хитре чăваш юррисене
Шăратсан чун киленет.

Эс тултартăн пилĕк çул –
Пилĕк çул вăл – паллă çул.
Чуп туса сана питрен
Саламлатпăр чĕререн.

Пултаруллă эс, маттур,
Санра вăйлă хăват пур,
Янкăр уçă сасăпа
Кăмăла çĕклен вăйпа.

Чăваш халăхĕ паян
Савăнать эсĕ пуртан.
Хастар, туслă йышпала
Талпăнса ут малалла.

Пирĕн наци радиовĕ –
Чăвашсен юратăвĕ,
Кашни кунах эфирта –
Эпир вара санпала.

## Ачча ялĕ

Пасарлă Ачча ялĕ
Ытарма çук илемлĕ.
Симĕс тумлă улăхĕ
Çутçанталăк ырлăхĕ.

Çут хĕвелпе йăлкăшать
Çавал шывĕ çăвăнса,
Ĕçчен халăх савăнать
Туслă йышпа пухăнса.

Ял çумĕнчи чукун çулĕ
Тăсăлать Мускав таран.
Каш-кашлать хырлăх вăрманĕ –
Тавралла улăх-çаран.

Хумханать хирте тыр-пулă
Йăтаймасть, пуçне пачах.
Ял ĕçченĕн пуян мулĕ
Пӳлмене тулать часах.

Лайăх, тулăх пурăнатпăр,
Пурте пур пирĕн кунта.
Килсе курăр, хыт кĕтетпĕр,
Хапăл тăватпăр чунтан.

20.12.14

## Атте-анне

Çуралсанах атте-анне
Ятне калатпăр чи малтан,
Йăлтăр кулса вĕсен сăнне
Юлатпăр астуса чунтан.

Атте-анне ăшши пуртан
Эп телейлĕ, хавас ялан,
Вĕсем пире ăс панипе
Утатпăр пурнăç çулĕпе.

Ӳссе çитсе çын пулсан та,
Хамăр мăшăрлă пулсан та,
Атте-анне чунпа пĕрле –
Ма тесессĕн вĕсем пĕрре.

Ĕмĕр-ĕмĕр атте-анне
Асран тухмаç, куç умĕнче.
Вĕсем пулсан мĕнле ырлăх,
Таçта тарать умри хурлăх.

02.03.14

## Санран ырри никам та çук

Сахал мар тав сăмах калакан
Аннене çак аслă çĕр çинче.
Кам пур анне пек юратакан,
Кам пур анне пек каçаракан.

Тав тăвар аннене ялан
Пуç тайса ĕмĕр-ĕмĕр чунтан,
Чун парса пĕчĕкрен ачашлан
Ӳстерсе вăй-хăват эс паран.

Пуç таяп ĕмĕрех аннене
Парнеленĕшĕн пире – ачасене,
Эс пулсассăн çăмăл чĕрене,
Ăшăтан яланах чунсене.

Укçа пулсан – пулмасан та
Аннене сутмаççĕ пасарта.
Кирек мĕнле анне пулсан та
Улăштармаççĕ пасарта.

16.09.13

## Туслă халăх йышĕнче

Тăван ялта пурăнатпăр
Тĕрлĕ халăх йышĕнче.
Пĕрне-пĕри пĕлетпĕр
Туслă пурнăç чуппинче.

Кам-кам çук-ши халь ялта,
Пурте ĕçчен те малта.
Вырăс, чăваш, узбек та,
Çармăç, ирçе, тутар та.

Кашни хăйĕн чĕлхипе
Калаçаççĕ хăйсемпе,
Чăвашсемпе чăвашлах
Шав пуплеççĕ йăл кулсах.

Хĕрĕсемпе каччисем
Хăйсем валли мăшăрсем
Хамăр ялтах тупаççĕ,
Туйра сиксе ташлаççĕ.

Тĕрлĕ халăх йышĕнче
Çакă аслă çĕр çинче,
Ялан туслă пурăнар –
Ĕмĕрех пĕрле пулар.

31.10.14

## Акатуй

Çурхи ĕçсем вĕçленсен,
Тыр-пул акса пĕтерсен,
Симĕсленет аслă уй –
Ирттереççĕ акатуй.

Ял ĕçченĕ палăртать
Уй-хир паттăрĕсене,
Ун ячĕпе шăратать
Ĕç мухтавĕн юррине.

Чысласа паттăрсене
Сĕнеççĕ хаклă парне.
Сăнĕсене хаçатра
Кăлараççĕ çаптарса.

Пурте ăшшăн ăмсанса
Саламлаççĕ пĕр-пĕрне:
– Малашне те паттăр пул –
Кашлатăр хирте тыр-пул.

Каччисем, ав тинкереççĕ,
Куç илмесĕрех сăнаççĕ:

Президиум сĕтел умне
Ларнă ĕçчен хĕрсене.

Хĕрĕсем пăшăлтатса
Пĕр-пĕрне тĕксе кулаççĕ,
Каччăсем çине пăхса
Ăшшăн, вăрттăн куç хываççĕ.

Савнă măшăр шырама
Пĕр-пĕринпе тĕл пулма
Мĕнле лайăх акатуй –
Кĕркунне кĕрлетĕр туй.

15.11.11

## Мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?

Мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?
Сана пĕр шелсĕр амантаççĕ.
Снарядпа бомбăсем çураççĕ,
Ах, мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?

Мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?
Уй-хир, вăрманĕсем çунаççĕ,
Таврана сĕрĕмпе хупласçĕ,
Ах, мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?

Çĕр чăмăрĕ юнпа пĕвенчĕ
Кăвак тӳпе те хăрăмланчĕ.
Сывлăшĕ, шывĕ вараланчĕ,
Ах, мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?

Ах, мĕнле чăтан эс, Çĕр-анне?
Çак ирсĕрлĕх – йăлт этемре.
Çапах ăна эс каçаран,
Çапах ăна эс ыр сунан.

15.09.14

## Ан хăвар эс ырана

Тăрăшса вăй хур ĕçре,
Çынсем ырлаччĕр сана.
Паян тумалли ĕçе
Ан хăвар эс, ырана.

Нимле ĕçрен ан хăра –
Ĕç хăратăр хăй санран.
Паян тумалли ĕçе
Ан хăвар эс, ырана.

Нихăçан ĕçрен ан тар,
Пултаруллăхна кăтарт.
Паян тумалли ĕçе
Ан хăвар эс, ырана.

Тытнă ĕçе алăран
Кахалланса ан пăрах.
Паян тумалла ăна,
Ан хăвар эс, ырана.

17.01.15

## Кушакпа пакша

Кушак кайрĕ вăрмана
Уç сывлăшпа сывлама.
Пакша курчĕ те ăна
Чĕнчĕ хăй патне курма.

Ватă чăрăш хăвăлне
Пакша хывнă йăвине.
Хатĕрленĕ хĕл каçма
Типĕтнĕ кăмпа, çырла.

«Хăна пул, кушак тусăм,
Ман патра ыр кăмăлпа.
Кайран хам та эп, чунăм,
Хăна пулăп сан патра».

Хатĕрлерĕ те сăйларĕ
Шĕшкĕн сарă мăйăрпе,
Компот вырăнне ĕçтерчĕ
Пылпа пилеш сĕткенне.

20.12.12

## Лаша çулĕ – 2014 çул

Пар лашапа Çĕнĕ çул
Килсе çитрĕ – ах, маттур:
Сан паян çуралнă кун,
Кăçал эсĕ хуçа пул.

Ал тытса эс сывпуллаш
Иртнĕ кивĕ çулпала.
Пĕтĕм халăхпа туслаш –
Тапса сик малтан-мала.

Хĕл Мучи шур кĕрĕкпе,
Юнашар Юр пикепе,
Килсе çитрĕç елкăна
Савăнтарма пур çынна.

Шурă юрĕ çурĕ-çурĕ,
Таврана шап-шурă турĕ.
Лаша çулĕ такăрланчĕ,
Малалла каймашкăн чĕнчĕ.

14.12.13

## Пушă пӳрт

Ултă кĕтеслĕ йывăç пӳрт
Ларать пушă янраса,
Атте-анне лартнă çурт
Тулаймарĕ кил-йышпа.

Тăрса юлтăм пĕр-пĕччен –
Никам çуккă чĕнекен,
Ватăлса атте-анне
Кайнă урăх тĕнчене.

Çĕнĕ пӳрт ларать шăпах
Янрамасть нимле сăмах,
Хурланатăп эп чунтан
Пĕрле пурнакан çукран.

Çавраймарăм эп кил-йыш,
Хутшăнмарĕ манăн йыш,
Ян янрать пуш пӳрт ялан
Тăр пĕчченех пулнăран.

Ултă кĕтеслĕ йывăç пӳрт –
Атте-анне лартнă çурт,
Ан çухалтăр ĕмĕрне
Йышпала пулар пĕрле.

04.02.15

## Паян пур та – ыран çук

Ватлăх килсе çулăхсан,
Сывлăх хытă хавшасан,
Ытла нумай пурнас çук –
Паян пур та – ыран çук.

Ĕмĕр хăвăрт вăл иртет,
Çултан çул вăй-хал пĕтет.
Сисмесĕр кун-çул çĕтет
Çĕр çинчен каяс килмест.

Ах, ачасем, тăн тытăр,
Нихăçан та ан манăр.
Çĕр çинчен эпир кайсан
Ас илĕр пире ялан.

Шутлă кунпа пурăнатпăр,
Пурнăç вĕçне тухатпăр.
Турри мĕнле çырнă-ши?
Хăçанччен вăл упрать-ши?

20.11.14

## Турри сывлăх парсан

Çамрăк чухне калаттăм,
Шухăша эп пусататтăм:
«Аллă çула çитесчĕ,
Çур ĕмĕр ман пурнасчĕ».

Вăхăт вĕçрĕ сисмерĕм
Аллă çултан та иртрĕм,
Ĕмĕт тулчĕ – савăнтăм,
Утмăла та çывхартăм.

Шутлă кунпа пурăнса
Ырлăхпа телей курса,
Тата нумай пурнасчĕ,
Çут тĕнчене савасчĕ.

Турри сывлăхне парсан,
Кун-çулĕ ăнса пырсан,
Аллă-утмăл ним те мар –
Çитмĕл çулччен пурăнар.

Ах, çитесчĕ, çитесчĕ,
Çитмĕл çула çитесчĕ,
Сакăрвуннăран иртсе
Тăхăр вунна çитесчĕ.

04.01.15

## Палăк умĕнче

Тăван ялăн варринче
Аслă клуб пахчинче,
Çĕкленнĕ палăк тӳпене,
Асăнса паттăрсене.

Çĕнтерӳ кунне паян
Хурлăхлă юрлать баян,
Асăнса вилнисене
Куçне хупнă чунсене.

Чун-чĕререн хумханса
Çӳллĕ палăк умĕнче,
Чечек кăшăлĕ хурса
Тав сăмах калаç пурте.

Ял варринчи палăка
Ват салтак салху сăнать.
Тĕнчери пур халăха
Мирлĕ пурнăç вăл сунать.

06.01.15

## Эп шанмастăп...

Эп шанмастăп никама та,
Пытармастăп – эп сана та,
Çук, шанмастăп юлташа та,
Хăш чух çывăх тăвана та.

Япăххи çинчен чунтан
Ман калас килет паян.
Элек, суя саракан
Ан пултăрччĕ нихăçан.

Мĕнле упрас чăнлăха,
Лекес марччĕ хурлăха.
Шанса калан сăмаха
Салатаççĕ туххăмрах.

«Шаннă кайăк йăвара
Çуккă», – теççĕ халăхра,
Авалтан калан ăна,
Тĕрĕсси пурах – сăна.

Кашни шаннă çыннăнах
Шанчăклă вăй пултăрах.

Ах, шеллесчĕ çын чунне –
Улталас мар пĕр-пĕрне.

Эп шанмастăп никама та,
Пытармастăп эп – сана та.
Çук, шанмастăп юлташа та,
Хăш-чух çывăх тăвана та.

20.11.14

## Сурăхури

Сурăхури – Кĕркури
Ваççа хĕрĕ – Варвари,
Эсир ăна паллатри?
Халь те качча кайман-и?

Сурăхури кунхине
Сурăх тытаç каçхине.
Юмăç яраççĕ хĕрĕсем,
Качча каяс шутлисем.

Пĕтĕм халăх савăнать
Сурăхурине уявлать.
Маччана пăрça çапса
Такмак-юмах юптараç.

Сурăхури, хĕр сăри
Хĕрсен сăри тутлă-и?
Улах ларнă каçсене
Асăнса тутанар-и?

15.01.15

## Виçĕ Йăван

Вĕсем виççĕн – виç Йăван
Виçĕ Йăван – пĕр тăван,
Аслă ывăлĕ, аслашшĕ
Тата хăйĕн тăван ашшĕ.

Тата пур-ха виç Йăван
Виçĕ Йăван – виç кумма
Виç кумма – виçĕ тăван
Виççĕшĕ те виç ялтан.

Пур-ха пур, хамăр ялтан
Виç Йăван, виç тракторпа
Ăмăртса ĕçлеç ялан
Виçĕ паттăр, виç Йăван.

Татах пур-ха виç ялтан
Виç юлташ, виçĕ Йăван –

Аччапа, Катек, Татмăш –
Виçĕ тус – виçĕ юлташ.

Çĕр çинче нумай Йăван
Пулсан пурăнма аван,
Вĕсемпе пĕрле пулсан
Çулăхмасть нимле тăшман.

21.02.15

## Ырă пурнăç арканать

Ĕçкĕçĕ Марук патне
Мăшăрĕ ĕçре чухне,
Марине каять тăн-тăн –
Каялла килет тăн-тан.

Манса кайрĕ вăл йăлтах
Ачисем çинчен пачах,
Выльăх-чĕрлĕхне пăхмасть
Мăшăрне кăна шанать.

Хутшăнмасть вăл ял-йышпа,
Юнашар мар мăшăрпа,
Çухалса çӳрет пĕччен
Çĕрĕпех, таçта ирччен.

Каласан – итлеместĕн,
Хăвна тытма пĕлместĕн,
Тавлашатăн кăлăхах –
Килĕшмест нимле сăмах.

Çакнашкал ĕçке пула
Япăхать ялпа хула,
Пăрăнать этем ĕçрен
Арканать çемье куллен.

13.11.12

## Ах, çăпата, çăпата...

Атте кайнă чух вăрçа
Фашистсемпе çапăçма,
Уринчи çăпатине
Салтса панă аннене.

Эрнерен атте кайсан
Виççĕн юлтăмăр çарран.
Ах, çăпата, çăпата
Ма çĕтĕлтĕн, тупата?

Сутăн илес çăпата –
Укçа çуккă пĕр пус та.

Кив çăпата сапласа
Пушăт пĕтрĕ сапасра.

Вунă çул тултариччен
Кÿршĕ Антун мучирен,
Вĕрентĕм çăпата хуçма.
Пушăтне пачĕ Куçма.

Çăпата çук чух çуран
Çÿретпĕр вара çарран,
Çĕн çăпата сырсассăн
Сывламан вара ассăн.

26.02.15

## ТĂВАТШАР ЙĔРКЕН

***

Вĕлтĕртетсе çаврăнса
Йăлтăртатса йăлкăшса,
Юр пĕрчи вĕçет çÿлтен
Çÿл тÿперен инçетрен.

***

Эрех чăпти Михала
Вĕреннĕ вăл кахала,

Арăмне хĕнет ялан –
Мĕнле-ха пĕрле пурнан?

***

Тĕнчен хĕрри пурах-ши,
Кам унта халь пулнă-ши?
Пулнă пулсан калăр-ха!
Тĕнчере пур халăха.

***

Аслă вăрман шĕшкĕлĕх
Çакнă măйăрне çумне.
Тункаталлă хыр-вĕтлĕх
Сарса хунă кăмпине.

***

Хутăшса кайнă эпир –
Ăнланатпăр пĕр-пĕрне:
Вырăссем пуплеççĕ чăвашла,
Чăвашсем сăмахлаççĕ вырăсла.

***

– Ăçта кайса кĕнĕ кӳршĕсем,
Тем чул пăхсан та курăнмаççĕ вĕсем?
– Пĕрисем кайнă пасара,
– Теприсем ăсаннă масара.

17.02.14

**Хамăр тимсĕр пулнăран**

Чуна пусать хăш-чух хурлăх,
Сая каять хаклă пурлăх
Вăхăтра асăрхаманшăн:
Çĕрсе йăванать йывăç,
Çухалнă укçа пĕр ывăç
Хамăр тимсĕр пулнăшăн.
Вĕçенкайăк ма юрламасть,
Выльăх-чĕрлĕх ма хунамасть?
Типсе ларнă çутă çăлкуç,
Суккăрланать çыннăн куçĕ
Асăрхаманшăн вăхăтра,
Хамăр тимсĕр пулнăран.
Хăш-чух мана пит йывăр
Темшĕн чунра пит тăвăр,
Инкек хăвăрт курăнмасăр
Килсе çапнине туймасăр,
Пурăнатпăр пĕр сисмесĕр
Хамăр тимсĕр пулнăран.
Пĕр çунаççĕ, пĕр сӳнеççĕ
Çăлтăрсем çӳл тӳпере.
Тем каласшăн, вĕрентесшĕн
Мана тăн парса çӳлтен,
Тарăхса вăрçаç куçран
Хамăр тимсĕр пулнăран.

17.03.15

# Тупмалли

Йӑлмачча – тӑван ял 3
Ачча ял тӑрӑхӗ 5
**Чунри ӑшӑ туйӑмсем**
Тӑван Ҫӗршыв 6
Тӑван чӗлхе 7
Ҫӗршыв хушсан 8
Шӑрӑх, пӑчӑ... 9
Кӗрхи хурӑн 10
Кӗркунне 11
Пӗлтӗр анчах кун пек марччӗ 12
Яка пыр 13
Ман кил-йыша мар хурлас? 14
Салтак ячӗ – пит сӑваплӑ 15
Вӑхӑтра вӑл ҫутӑр 16
Сарӑ ҫулҫӑ тӑкӑнать 17
Шурӑмпуҫ ҫӑлтӑрӗ 18
Савнӑ тусӑм 19
Ӑҫта курнӑ эп сана? 21
Кун-ҫул тараси 22
Ма пурӑнас-ха ман пӗччен? 23
Куҫ курать те шӑл витмест 24
Ма савӑнса юлас мар? 27
Ман санпа пулас килет 28
Тавах атте-аннене 29
Пӗр-пӗччен 30
Хаклӑ анне 31
Пурӑннӑ чух савӑнар 32
Вӑйӑра 33
Манаймас ҫаплах сана 34
Ан сая яр эс мана 35
Ӑҫта ҫӳретӗн ютра? 36
Ҫурмалла пайлар 37
Пур-ха, пур кирлӗ сӑмах 38

Сӳннӗ юрату 39
Ах, ҫиллентӗн аннене 41
Пит нумай сана шырарӑм 43
Виҫ хӗрарӑм – пӗр пасар 44
Курманнин курас килет 45
Эпӗ пӗччен мар 46
Ма пӑрахрӑн эс мана? 48
**Пурӑнӑҫ картлашки**
Ӑсату 49
Шӑллӑм 51
Виҫӗ район чиккинче 52
Тӑван кил 54
Пирӗн радио 55
Ачча ялӗ 56
Атте-анне 57
Санран ырри никам та ҫук 58
Туслӑ халӑх йышӗнче 59
Акатуй 60
Мӗнле чӑтан эс, ҫӗр-анне? 62
Ан хӑвар эс ырана 63
Кушакпа пакша 64
Лаша ҫулӗ 2014 ҫул 65
Пушӑ пӳрт 66
Паян пур та – ыран ҫук 67
Турри сывлӑх парсан 68
Палӑк умӗнче 69
Эп шанмастӑп 70
Сурӑх ури 71
Виҫӗ Йӑван 72
Ырӑ пурнӑҫ арканать 73
Ах, ҫӑпата, ҫӑпата 74
Тӑватшар йӗркен 75
Хамӑр тимсӗр пулнӑран 77

*Литературно-художественное издание*

**Васильев Михаил Васильевич**

**КУН-ÇУЛ УТТИ**
**ПРОЖИТЫЕ ГОДЫ**

Сăвăсем
Стихи
*На чувашском языке*

Редактор В.Н.Алексеев
Художник А.С.Тувалкина
Набор Р.В.Попова

Формат 70x90 1/32, тираж 100 экз.
Отпечатано